

*Елена Смородинова-Хурлăхан*
*«Салам»*

http://aida.ucoz.ru

**Г. Ефимов. «Салам! – ялан сунаççĕ сывлăх…» сăвви.**
**«Салам» сăмахăн пĕлтерĕшĕ.**

**Урок эпиграфĕ:**

*Салам. Салам. Салам. Салам.*
*Мĕнле асамлă вăл сăмах!*
*Чăвашшăн хăть ăçта ялан*
*Вăл парнерен те хаклăрах.*
*(Петĕр Ялкир.)*

http://aida.ucoz.ru

## *Георгий Ефимов. «Салам! – ялан сунаççĕ сывлăх…» сăвă.*



*Георгий Ефимов*

- Салам! – ялан сунаççĕ сывлăх,
Параççĕ ал, сăн йăлтăрать.

- Сыв пул! – тесессĕн санăн сывлăш
Сисмесĕр пўлĕнсе ларать.

***1- 2 – мĕш йĕркесем: Салам! – сывлăх – тăнăçлăх – савăнăç.***
***3- 4 – мĕш йĕркесем: Сыв пул! – ырату – уйрăлу – синкерлĕх.***

http://aida.ucoz.ru

# В.Солоухин «Здравствуйте»



— Здравствуйте!—

Что особого тем мы друг другу сказали?

Просто «здравствуйте», больше ведь мы ничего не сказали.

Отчего же на капельку солнца прибавилось в мире?

Отчего же на капельку счастья прибавилось в мире?

Отчего же на капельку радостней сделалась жизнь?

http://alda.ucoz.ru

***«Салам» сăмахăн лексика пĕлтерĕшĕ:***

Вырăсла «салам» сăмаха словарьте

1. «привет, приветствие; поклон// приветственный; пурне те хĕрӳллĕ салам! Горячий привет всем!»;
2. поклон; реверанс; кĕçĕн çын салам пани *уст*. ритуальный поклон новобрачной.

***(«Чăвашла-вырăсла словарь»/ М.И.Скворцов ред. – М.: Русский язык, 1982. – 340 с.)*** куçарнă.

http://aida.ucoz.ru

## *«Салам» сăмах этимологийĕ.*

Чăваш чĕлхинче ку сăмах мĕнле пулса кайнине М.Р.Федотовăн «Чăваш чĕлхин этимологи словарĕ» тăрăх пăхса тухрăмăр. Унта çапла каланă: «**САЛАМ** поклон, привет». Унăн ытти тĕрĕк чĕлхисенчи пĕлтерĕш тӳр килĕвĕсем çаксем:

«привет, поклон, приветствие» (тĕрĕк),

«приветствие» (уйгур, коми, кăркăс),

«привет, приветствие» (пушкăрт).

Тĕрĕк чĕлхисене «салам» сăмах араб чĕлхинчен кĕнĕ.

Араб чĕлхинче «мир, покой, безопасность; привет, приветствие, поклон» тенине пĕлтерет.

http://aida.ucoz.ru

## *«Салам» сăмахăн формисем:*

**саламла** «здороваться, приветствовать, поздравлять»;

**саламлаш** «*взаимн*. здороваться, приветствовать друг друга»;

**саламлă** «приветственный»;

**саламлăн** «приветственно, приветливо, приветно;

**саламлăн алă сул** приветно махнуть рукой»;

**саламалик** *уст*. то же, что **салам алейккем!** «*уст*. мир вам!»;

**саламлăх** «на педмет приветствия, для приветствия»;

**Салампи** «имя девочки».

http://aida.ucoz.ru

# *«Салам» сăмахпа пулнă сăмах майлашăвĕсем*




http://alda.ucoz.ru

# *Саламсем тĕрлĕрен пулаççĕ.*




http://aida.ucoz.ru

*Атăл тăрăхĕнчи чĕлхесенче:*

**Çармăс** – Салам! шёла!

**Удмурт** - Салам! Чырткем! Зечбур!

**Тутар** - Сәлам! Исәнме! Нихәл!

**Пушкăртла** - Сәләм! Хаумы! Иçәнме!

**Ирçе, мăкшă** - Шумбрат! Парарьсема!

http://aida.ucoz.ru

## *Чăваш çыравçисем хăйсен кĕнекисене, хайлавĕсене ят панă чух «салам» сăмахпа усă курнă тĕслĕхсем*

- «Салам» сăмах чăваш çыравçисен хайлавесен ячĕсенче тĕл пулаççĕ. Хайлав ячĕсем:
- Илле Тăхти. **«Салам»** калав.
- Юхма Мишши. «**Салам** сире…», «**Салам**, пуласлăх!..», «**Салам**, çĕн яш-кĕрĕм, тин курнă çĕн тĕррĕм…» сăвăсем.
- Виталий Станьял.«Мана паян санран **салам** каларĕç…» сăвă.
- Анатолий Ырьят. «**Салам**латăп», «**Салам**» сăвăсем.
- Аркадий Русаков. «**Салам**!.. Аван!..», «**Салам**» сăвăсем.
- А.Артемьев. «**Салам**пи» повесть.
- П.Хусанкай. «**Салам**пи», «**Салам**пи. Пĕчĕк хĕрĕме» сăвăсем.
- Петĕр Ялкир. «**Салам**» сăвă.
- Художниксен ĕçĕсенче те тĕл пулать ку сăмах: чăвашсен 1-мĕш космонавтне А. Г.Николаева халалланă ĕç – Н.В.Овчинниковăн «Салам, Çĕр!» картини.

http://aida.ucoz.ru

# *Чăвашсен 1-мĕш космонавтне -А.Г.Николаева халалланă ĕç*

- .



Н.В.Овчинников



«Салам, Çĕр!» картина

http://aida.ucoz.ru

# Чăваш юррисен ячĕсенче «салам» сăмахпа усă курнă тĕслĕхсем

- В.Адюков «Салам, хăта, тăхлач»;
- Хусан чăвашĕсем «Салам»;
- Руфина «Салам, тăван»;
- Михаил Иванов «Салам юрри»;
- Чăваш халăх юрри «Салампи юрри»;
- Светлана Васильева-Вутăшпи «Саламлатăп çуралнă кунпа»;
- Ольга Храмова «Саламлатăп»;
- Петрова К. «Саламлатăп»;
- С.Яковлева «Уявпа саламлатăп»;
- Роман Перепёлкин «Саламлатăп Çĕн çулпа!»
- Андрей Шадриков «Саламлатăп»;
- Татьяна Кунер «Саламлатап, анне»;
- Янташ «Саламлатăп»;
- Виктор Сергеев «Саламлатăп, тусăм».

http://aida.ucoz.ru

# Ыйтусемпе ĕçлени:

*Эпир паян урокра мĕнле тема пăхса тухрăмăр?*

*Мĕнле ĕççем туса ирттертĕмĕр ?*

*Мана паян ку тĕлĕнтерчĕ …*

*Манăн тата çакăн çинчен пĕлес килет…*

http://aida.ucoz.ru

## Киле ĕç пани (сĕннĕ ĕçсенчен пĕрне тумалла)

- «Сире пурсăра та çĕклейми пысăк салам яратăп» предложенипе усă курса тăвансем патне çыру çырмалла.
- Элĕк салинчи «Салам» кафе валли реклама çырса, ÿкерсе килмелле.
- Г.Ефимовăн сăввинчи килĕштернĕ çаврасене пăхмасăр вĕренмелле.

http://alda.ucoz.ru